«Симĕс ĕç çире» малашлăха пăхса

Пĕр тĕллевлĕн, йывăрлăхсене сирсе

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Пĕлтĕр район чĕрĕ виçепе аш-какай пурĕ 2124,1 тонна (унченхи çулхипе 72,6 процент), усă куракан 100 гектар пуçне 48,8 центнер (73,5 процент) туса илнĕ. Аш-какай комбинатне сыснасем чĕрĕ виçепе 105 кг, мăйракаллă шултра выльăхсем 332 кг виçепе ăсаннă. Çав вăхăтрах «Оринино» хуçалăхăн мăйракаллă шултра выльăхĕсем 429 кг виçепе аша кайнă.

Районĕпе 10008 тонна сĕт сунă пулсан, 100 гектар çĕр пуçне 230,2 центнер (2008 çулхин 87 проценчĕ) сĕт туса илнĕ. Кашни ĕнерен вăтамран 3770 кг сĕт сунă. 8 хуçалăх вăтам сăвăма 3500 килограмран ирттернĕ пулсан, «Герой» хуçалăхăн кăтартăвĕ – 5036 кг.

Выльăхран ытларах продукци илес тесен паха апатпа тивĕçтерни малти вырăнта пулмалла. Пĕлтĕр хĕл валли кашни выльăх пуçне 19,1 центнер апат единици хатĕрлени кирлĕ шайăн 68 проценчĕ кăна пулчĕ. Çавăнпа та хĕллехи тапхăрта выльăхран продукци илесси чакрĕ. Тĕрлĕрен макро-, микроэлементсемпе, хушма хутăшсемпе пуянлатнă рацион пулманран çамрăк выльăхсен кулленхи ўт хушаслăхĕ те пĕчĕк пулчĕ. Çакна ăнланнисем кунта та çухатусен çулĕнчен пăрăнчĕç. Чкалов яч. хис, «Оринино», «Герой», «Свобода» хуçалăхсенче мăйракаллă шултра выльăхсен кулленхи ўт хушаслăхĕ 618 – 1102 грамм пулчĕ пулсан, «Рассвет» тата «Передовик» хуçалăхсенче – 239-374 грамм.

Сыснасен ўт хушаслăхĕпе те лару-тăру çавнашкалах. Кунта кулленхи ўт хушаслăх вăтамран 339 грамм пулнă. Çав вăхăтрах «Восток», «Оринино», «Герой», Суворов яч. хис. хуçалăхсенче ўт хушаслăх 412-470 грамм пулнă. Суворов яч. хис. хуçалăхри А. Филипповапа Н. Гордеева пăхакан сыснасем вара талăксерен 581 грамм ўт хушма пултарнă.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики çулсеренех пысăк çитĕнўсем тăвать. Иртнĕ çул та вăл 49 миллион та 555 пин (104,8 процент) çăмарта илме пултарнă. Пĕр чăх пуçне – 324 çăмарта.

«Герой» хуçалăхри сурăх пăхакан Р. Соловьева кашни сурăхран 4,3 кг çăм касни, 100 сурăхран 105 путек илни – çак отраслъти ўсĕм. Мичурин яч. хис. хуçалăхри В. Яковлев утарçă кашни вĕллерен 25 кг пыл илни (пĕтĕмпе 1,5 тонна) – ĕçлекенсемшĕн ўсĕм чикки çуккине çирĕплетекен тĕслĕх.

Иртнĕ çулхи ĕçсене тивĕçлипе пĕтĕмлетсе паян çитес хĕл кунĕсем валли апат хатĕрлессипе ырми-канми ĕçлемелле. Çапла тăвансем аталану çулĕнче çитес хĕлле те уксахламасса шанатăп.

В. АНАНЬЕВ,
район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертўçи.

Пушар хăрушсăрлăхĕшĕн

Ут çи тимлĕх ыйтать

Ăшă çу кунĕсем пуçланчĕç анчах-ха. Районти пĕрлешўллĕ хуçалăхсемпе ялти килти хушма хуçалăхсенче çитес хĕл валли выльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçсем анлă пыраççĕ. Ыранхи кун пирки шутлани лайăхха та, анчах çак тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕ пирки самантлăха та манмасан ыранхи кун татах та тулăхрах пуласси пирки те иккĕленў çук. Çĕр ĕçченĕн çак ответлă тапхăрĕнче «хĕрлĕ автан» вăй илсе сиен кўресрен кашнийĕнех асăрханмалла: хирте те, килте те.

Умра – ут çи. Халăх та, техника та ĕçе массăллă явăçнă тапхăр, ыранхи куна çиччĕ виçсе ĕçлемелли вăхăт. Кунта пушар хăрушсăрлăхĕ малти вырăнта пулмалли пирки калама та кирлех мар ĕнтĕ, анчах... Ут çи çулленех пушар тухаслăхпа пуян. Тимлĕхе самантлăха çухатни вуншар тонна типĕтсе янтăланă утă-улăма кĕл тăвать, хаклă та паха техникăна юрăхсăра кăларать. Çынсем самантлаха тимлĕхе çухатнипе пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче те, уйрăм çынсен килĕсенче те утă хранилищисемпе сарайсем, капансем, ĕç тăвакан техника нумай çунса кĕлленет. Çакна шута илсе тата ял ĕçченĕн хальхи хĕрў ĕç çийĕ вут-кăвар алхаснипе ан тĕксĕмлентĕр тесен, пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче çак ĕçсене кая хăвармасăр туса ирттермелле:

1. Выльăх апачĕ хатĕрлекен тата упракан, ГСМ склачĕсене, машинăпа трактор паркĕсене, витаминлă курăк çăнăхĕ тунине тата упранине пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе комиссипе пăхса тухмалла. Çав вырăнсенче шыв, пушар сўнтермелли пирвайхи хатĕрсем, çыхăну, пушар çинчен сасă парса пĕлтермелли устройствăсем пулмалла.

2. Выльăх апачĕ хатĕрлеме хутшăнакан ĕçченсене, механизаторсемпе водительсене ятарлă журналта алă пустарсах ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăх правилисемпе паллаштармалла.

3. Утă капанĕсене е утă рулонĕсем упранакан вырăнсене электричество линийĕсенчен 15 метртан, çул хĕрринчен 20 метртан, çуртсенчен 50 метртан кая мар вырнаçтармалла.

4. Утă çине хутшăнакан техникăна пушар сўнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе тата хĕм сўнтермелли устройствăсемпе тивĕçтермелле.

Хăрушсăрлăхшăн тăрăшса çак ансат правилăсене пурин те пурнăçламалла. Унпа пĕрлех çак хĕрў вăхăтра ведомствăлла пушар хурал ĕçченĕсен службине специалистсем тăратса вăйлатмалла. Пушар сўнтерме пăхнă техникăна çителĕклĕ бензинпа, кирлĕ чухлĕ шывпа тытмалла, юсавсăр пушар машинисене строя тăратассипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрленĕ выльăх апачĕ çитес хĕл кунĕсенче те производствăна хавшатмасăр тытса пыма пулăшĕ.

Пушар хăрушсăрлăхĕпе паян туса ирттернĕ ĕç çывхаракан вырмара та ытлашши пулмĕ.

А. ЕФИМОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан.

Районти пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче

Тупăшшăн паян тимлемелле

Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн мелĕ. Час-часах пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче ĕçлекен тата ĕçлеме пултаракан çĕнĕ йышши техникăн, пысăк тухăç паракан ăратлă выльăхсен, çĕнĕ ял хуçалăх культурисен выставкисем иртеççĕ. Унта пулсан, вĕсемпе ĕçлекенсене курсан, йывăрлăхсем пирки кашни утăмра аса илтерекен пессимиситсен куçĕпе ял хуçалăхĕ йывăрлăхсене çĕнтерсе майĕпен вăранса пынине куратăн. Çакăн хыççăн çĕнĕлĕхсемпе хавхаланса, мал ĕмĕтлĕ тĕллевсемпе ĕçе утатăн. «АПКна аталантарасси» наци проекчĕпе ял çынни малашлăха пăхни çĕнĕ ўсĕмсем пирки шухăшлаттарать, çĕнĕ тĕллевсене çул парать. Ял хуçалăхĕнче «симĕс ĕç çи» пырать. Пĕрлешўллĕ хуçалăхсем ăна малашлăх аталанăвĕн никĕсне хураççĕ-и, производствăна «АПКна аталантарасси» нацпроектпа килĕшўллĕн çĕнĕ шая çĕклессине тĕллеве лартаççĕ-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса район хаçачĕн экономика пайĕн редакторĕ Анатолий БЕЛОВ районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ветлабораторири выльăх тухтăрĕпе Алина Александровна КАЗАКОВА химик-токсиколога тĕл пулнă. Пĕрлешўллĕ хуçалăхсенче обществăлла выльăхсем валли уяр кунпа усă курса мĕнле пахалăхлă апат янтăлаççĕ? Корреспондент обществăлла выльăх-чĕрлĕхе продуктивлăха чакармасăр хĕл каçарма мĕн чухлĕ апат кирлипе паллашнă, паха апатăн перекет çулĕпе кăсăкланнă. Ĕç çине шут виçипе çеç мар, пахалăх тĕлĕшпе те пăхмалла. Апат виçи сумлах курăнмасан та, пахалăх тивĕçлĕ шайра пулсан, пысăк продуктивлăх кĕттермĕ. Кун пек чух экономика тĕрекленесси те куç кĕрет.

ИНÇЕТРИ ВĂЛ ÇИТĔ

– Алина Александровна, «симĕс ĕç çи» пуçланни пĕремĕш кун мар ĕнтĕ. Анчах ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем хĕл кунĕсем инçетре-ха тесе выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе хăй еккипе ямаççĕ-и? Ĕç çире пахалăх ыйтăвне малти вырăнта тытаççĕ-и? Çаксем вĕсем çывăх пуласлăхра выльăхчĕрлĕх отраслъне малалла аталантармалли никĕс. Çапла вĕт?

– Хирĕçлеместĕп, выльăхчĕрлĕх ĕрчетессипе кун сиктермесĕр ĕçлекен çыншăн вăл каламасăрах паллă. Çавăнпа та эсир мĕн каласшăннине çур сăмахранах ăнлантăм. Хĕл инçетре тесе алă сулас марччĕ. Инçетри вăл çитĕ, шурă юр çийĕн вара утă та, сенаж-силос та хатĕрлеймĕн. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Паян авă хресчен вырмана хатĕрленме пуçларĕ пулин те, выльăх апачĕ янтăламалли тапхăр пур енлĕ вăй илсе пырать. Хресченшĕн хăйне евĕр пысăк ответлăх çак самант. Районти пĕрлешўллĕ хуçалăхсен ку вăхăтра кашни уяр кунпа туллин усă курса çитес хĕл валли бизнес-плансемпе килĕшўллĕн выльăх апачĕ хатĕрлемелле. Тĕллевсем вара пĕчĕк мар. Акă тулăх хĕл каçма пĕрлешўллĕ хуçалăхсен çак çу кунĕсенче 5665 тонна паха утă, 8251 тонна сенаж, 19730 тонна силос хатĕрлесе хумалла. Çакна пурнăçлассипе паян кашни хуçалăхри улăх-çарантах иртен пуçласа каçчен хĕрў ĕç пырать: çулаççĕ, тавăраççĕ, преслаççĕ, вĕтетсе траншейăсене турттараççĕ. Выльăх апачĕ хатĕрлессипе уй-хирте ĕçлекен механизациленĕ бригадăсен кĕске хушăрах 10097 гектар çинчен нумай çул ўсекен курăксене, 1631 гектар пĕр çул ўсекен курăксене çухатусемсĕр пуçтарса кĕртмелле. Нумаййи-сахалли пирки калаçмăпăр, анчах ĕçĕ çителĕклипех. Ял хуçалăх ĕçченĕсем умĕнчи паянхи тĕп тĕллев – çак ĕçсене пахалăхлă пурнăçласси. Утă уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне «симĕс ĕç çийĕн» малтанхи утăмĕсем паллă. Анчах мĕн пурнăçлани лăпланмалли ларутăру мар-ха.

Пĕрлешўллĕ хуçалăхсем иртнĕ тунти кун тĕлне нумай çул ўсекен курăксене 3726 гектар çулса 3546 тонна (63 процент) утă, 1700 тонна (21 процент) сенаж тата 4480 тонна (23 процент) силос янтăланă. Кам епле ĕçленине манăн паян пахалăх кăтартăвĕсем урлă хак парас килет.

ПАХАЛĂХ КИРЛĔРЕХ

– Кун çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрсан та ытлашши пулас çук.

– Эпир те çапла шутлатпăр. Паянхи кун Муркашри ветеринари лабораторийĕнче хĕл валли хатĕрлекен силос-сенажа вун пĕр, утăна ултă кăтартупа, симĕс апата экспресс-мелпе 6 кăтартупа траншейăна хурас умĕн тĕрĕслетпĕр. Апат пахалăхне тĕрĕслеттерес тесен хуçалăхсен пирĕн патăмăра килекен утăн пĕр тĕрĕслевĕшĕн 121 тенкĕ те 50 пус, силос-сенажшăн 206 тенкĕ тўлемелле. Пирĕнпе çыхăнмалли телефон 62-8-62. Çакна та калатăп, апат пахалăхне хуçалăхсем анлăрах тĕрĕслеттерес теççĕ пулсан, вĕсен апат тĕслĕхĕсене Çĕрпўри агрохимцентра ăсатмалла пулать. Унта апата 13 енлĕ тĕрĕслеççĕ. Çакна та каласа хăвармалла, «симĕс ĕç çире» люцернăпа клевера ытларах сенаж хывма усă курмалла.

Апат-симĕçре каротин, протеин тата ытти тутлăхлă япаласен хисепĕ мĕнлине пĕлес тесен тĕрĕслев партийĕсене апата хатĕрленĕ май экспертизăна вăхăтăн-вăхăтăн тăратсах пымалла. Тĕслĕхрен, утă ури туса пĕтерсенех унăн пахалăхне тĕрĕслеттересси пирки шутламалла. Сенаж-силоса вара пĕрремĕш тĕрĕслеве траншейăна хупас умĕн илсе пымалла, хыççăн – хупнăранпа 30-40 кун ирттсен, виççĕмĕш хут – хĕлле ăна выльăхсене çитерме пуçласан. Эпир кашнинченех апатри нўрĕкпе каротин тата протеин виçине курса унăн класноçне палăртатпăр. Йывăрри нимĕн те çук темелле, анчах хăш-пĕр хуçалăхсем çак ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Нумай чухне хĕвелпе çумăр айĕнче нумай выртса пахалăхне çухатнă курăка капана хывсан та утă хатĕрлерĕмĕр тесе хăйсене лăплантараççĕ. Çапла майпа каротинпа ытти тутлăхлă япаласене пĕтернĕ хыççăн туни кăна юлнă утăпах вĕсем выльăхсен продуктивлăхне ўстересси пирки калаçаççĕ. Ку тĕслĕхпе малалла каласни те ытлашши. Апат пахалăхне пĕлни продуктивлăха планлама май панине шута илсен, тĕрĕслевсем ирттерме каякан пысăках мар укçатенкĕ вуншар хут пысăкрах калăпăшпа каялла таврăнать.

Силос-сенаж хатĕрленĕ чух та траншейăсене кĕске вăхăтра хупмасан тата траншейăна пынă массăна çителĕклĕ пусăрăнтарса тăмасан, тепĕр майлă каласан, технологие пăхăнмасан, силос-сенажăн пахалăхĕ палăрмаллах чакать. Кунашкал апатра выльăхсене кирлĕ витаминсем юлмаççĕ, выльăх организмĕнче пачах кирлĕ мар çу кислоти (масляная кислота) çеç нумайланать. Кун пек апатпа тăрантарнă выльăхăн организмĕнче веществосен ылмашăвĕ чакать, сĕтри çу хисепĕ пĕчĕкленет, выльăхсен организмĕ тĕрлĕ чирсемпе кĕрешейми пулса каять, пăрусем илесси пĕчĕкленет, вĕсем начар çуралаççĕ, ĕнесем пăруланă хыççăн вăхăтра пĕтĕленеймеççĕ. Хăш-пĕр хуçалăхра çеç çакна саплаштарма выльăхсене микро- тата макрохутăшсем параççĕ.

КОНСЕРВАНТСЕМ ПИРКИ

– Паян хуçалăхсенче силос хатĕрленĕ чух тĕрлĕрен хими консерванчĕсемпе усă кураççĕ...

– Ку вăл выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри çĕнĕ технологипе çыхăннă. Малта пыракан технологисемпе пирĕн пур сферăсенче те çителĕклĕ усă курмалла. Хăшĕсем çакна хăйсен ĕç тĕллевне лартаççĕ. Акă пĕлтĕр пирĕн хуçалăхсем ытларах кальций пропионачĕпе усă курни ырă пулăм пулни хĕл кунĕсенче палăрчĕ. Кун пек апат пăсăлмасть, тутлăхне çухатмасть. Хими консерванчĕсем биобактерипе пуян. Кăçал силос-сенаж хатĕрлессипе нумай хуçалăхсем çак çул çине тăчĕç. Çавăн пекех «закваска» тата «Лактис-К» консервантсем пур. Пирĕн хуçалăхсем çав-çавах ытларах чух кальций пропионачĕпе ĕçлеме пуçларĕç. Асăннă консервантсем биобактерисемпе пуян. Вĕсемпе вырăнлă усă курсан сенаж-силосри тутлăхлă япаласем 25-30 процент таран упранса юлаççĕ. Кун пек чух выльăх апачĕн йўçеклĕхĕ чакать, хими составĕ лайăхланать, сахăрпа протеин шайлашăвĕ пысăкланать, çу кислоти пачах та пулмасть.

Çакна та каласа хăвармалла, хими консерванчĕсемпе усă курнă чух технологие çирĕп пăхăнмасан, выльăх апачĕн пахалăхĕ малалла утăмласси иккĕленўллĕ пулса юлать. Кунта выльăх апачĕ хатĕрлекенсене тепĕр асăрхаттару пур. Вăхăт иртнĕ май пахалăхпа çыхăннă çитменлĕхсем вăй ан илччĕр тесен янтăлакан апат-çимĕç пахалăхне кая хăвармасăр паянах тĕрĕслеттерсе тăмалла. Ăна кура производствăна планлама пулать. Ку вара каллех хуçалăх экономики çине витĕм кўрет.

– Эсир калани питĕ уçăмлă. Анчах Сирĕн ăнлантаруллă-асăрхаттаруллă сăмахсене итлекенсем нумайăн-и? Пĕлтĕрхи выльăх апачĕн пахалăхĕ еплерех пулнă?

– Кунта пĕр пек хурав пама çук. Камсем апат тĕрĕслеттерĕвĕ çине тимлĕ пăхнине маларах каларăм ĕнтĕ. Иртнĕ çулхи кăтартусем çинче чарăнас пулсан, пĕлтĕрхи çу кунĕсенче янтăланă 6585 тонна утăн, 25756 тонна силосăн, 5990 тонна сенажăн пахалăхĕ пысăк пулнă. Вĕсем управра хăйсен тутлăхне çухатман. Манăн пĕр пĕтĕмлетў тăвас килет: ыранхи куна пăхса ĕçлекенсем выльăх апачĕн виçине те, пахалăхне те куç умĕнчен ямаççĕ. Паянхи кунпа çеç пурăнакансемшĕн вара сенаж траншейи хупăнтăр та, утă капанĕ е рулонĕ ытларах пултăр.

Сăмахăма вĕçлесе хамăн тĕп сĕнĕве парас килет. Выльăх апачĕ хатĕрлекенсем унăн пахалăхне тĕрĕслесе тăрассипе пирĕнпе тачă çыхăнса ĕçлессе эпир шанса тăратпăр. Пĕрле пĕр тĕллевлĕ пулсан пахалăх та пулĕ, производство та ўсĕ, экономика та вăйланĕ.